# УХСАЙĂН АЧА-ПĂЧА ХАЙЛАВĔСЕНЧИ ЕВĔРЛЕВ СĂМАХĔСЕН СИСĔМЛĔ ТĔНЧИ

Илемлĕ литература хайлавĕсенче евĕрлев сăмахĕсемпе анлă усă курни сăнарсене туллин те техĕмлĕн кăтартма май парать. Мĕн ачаран тăван сăмахлăх туприпе пуянланнă Ухсай Яккăвĕ çакна питĕ лайăх пĕлсе тăнă. Халăх поэчĕ ахальтен мар хăйĕн сăввипоэмисемпе романĕсенче вĕсене тăтăшах ĕçе кĕртет. Тĕслĕхрен, вăл ачасем валли çырнă вуннĕр пысăках мар хайлавра евĕрлев сăмахĕсем 113 хутчен тĕл пулаççĕ. Ку сахал та мар. Çитменнине, сăвăç çав пуянлăхпа хăйне евĕрлетсе, ухсайлатса тейĕпĕр, усă курать. Ытти поэтсемпе танлаштарсан, çакă ăна пĕр Ухсая кăна тивĕçлĕ вичкĕн тĕнче çавăрма пулăшать. Сăвăçăн ку пултарулăхĕ унăн малтан çырнă "Пуканесен бригади" (1934) сăввинчех[1] аван палăрать.

Акă хайлаври пĕчĕк ача кил картине тухса хăйĕн йыттине йыхăрать: "Вăл шăвик чĕнет тусне". Кайранхи кăларăмра поэт ăна: "Тутипе шăвик-шăвиккĕн // Шăхăрса чĕнет тусне",[2] — тесе тӳрлетет. Ахăртнех, ку улăштару Ухсая ача тути çепĕçрех кĕвĕ кăларнине калама кирлĕ пулнă, мĕншĕн тесен çитĕннĕ çын шăввик шăхăраканччĕ.

*Хам-хам!* е *ляв-ляв* вĕрекен йытă та сăвăç хайлавĕнче "*хăр-хам*"[2] вĕрет, *чĕвĕл-чĕвĕл* тăвакан кайăк "*чĕвĕл-чĕвĕл кĕвĕлет*"[2].

Чĕлхе ăсти пулнă май, вăл 1936 çулта çырнă "Кăмака çинчи Иван" юмахĕнче те пурте хăнăхнă евĕрлев сăмахĕсене Ухсай хĕрӳлĕхĕ кӳрет:

Сиксе анчĕ урайне,
Ăна кăмака çине
*Тăпăр-тапăр* хăпарчĕ,
Иван пулăр ун ячĕ. [3]*

(Аса илĕр, Н.Шелепи сăнарланă ача "кăмака çине, асатте патне, *йăпăр та япăр*" хăпарнăччĕ. — *А.Т.*)

Çута çунатлă пулла
Ярса илет те алла
*Йăл-йăл* пăхса хăй кулать,
Çапла сăмахсем калать.[3]

Эпир астунă тăрăх, пирĕн асатте-асаннесем "тăпăр-тăпăр чупать", "йăл-йăл кулать" текенччĕ.

Поэт ку юмаха кайран урăх ятпа ("Юман чукмар") чылай улăштарса кăларнă. Çĕнĕ тĕслĕхре те сăвăç евĕрлев сăмахĕсене Ухсай сĕмĕ кĕртет:

Пĕрре вĕрĕ çил-тăман,
*Йăкăлт* ӳкĕп, тет Иван.[4]

Эп сана, çăрттан юлташ,
Хĕрхенме килмен, *чăш-паш*
Тăвăп ĕнтĕ хальхинче
Çаврака çатма çинче.

Акăш-макăш çил-тăман
Килсе тухрĕ ăнсăртран,
*Пăр-пар* юра вĕçтерет,
Кĕрĕке хывса илет.

Хĕç ванать те кĕленче пек,
*Чĕлпĕр-чĕлпĕр* тăм чӳлмекĕн
Салапать пăшал кĕпчекĕ.

*Кĕпĕр-кĕпĕр* пĕрене
Тайлăк-тайлăк пӳрт умне
Ярăнса кустарăнать,
Купана кĕрсе выртать.

Ушкăн-ушкăн кĕреçе
Тытăнать хайхи ĕçе,
*Тĕпĕр-тĕпĕр* васкаса
*Шакăрт шăн* çĕре касса

Сирпĕнет ик айккине,
Шурă кĕрпĕ юр çине.
Пуртăсем сиксе тухаççĕ,
Туклатаççĕ, калаçаççĕ.[4]

Чăваш "йăкăлт сикрĕ", "тĕпĕр-тĕпĕр турĕ" текенччĕ. Кунта çав сăмахсемех урăхларах сăн хываççĕ. Инверси тени вăл е ку çавринче ăнăçлах пулса тухайман пулин те, вĕсем ытти евĕрлев сăмахĕсемпе пĕрле курăмлă ӳкерчĕк тăваççĕ. Хăш-пĕр сăмахĕсем вара (чăш-паш, пăр-пар, чĕлпĕр-чĕлпĕр) паянхи чăваш сăмахсарĕнче те вырăн тупайман.

Ухсай Яккăвĕн евĕрлев сăмахĕсен хăйне уйрăм тĕнчи "Кĕслеçĕне упа" юмахра питĕ курăмлăн палăрать. Ăна

*Кунта тата малалла хайлавсен ячĕсене кăна кăтартатпăр.

пула хайлаври сăнарсем куç умне чăн пурнăçри пек тухса тăраççĕ.

Микуç пичче пасарта "пĕр тĕркĕм пулнăт, пилĕк мăнăрçăпата"сутса "йăнтăр-йăнтăр саслă" хĕрĕх хĕлĕхлĕ кĕсле" (Н.Васанкка "Кĕсле" сăввинче "Кăлттин-кăлттин кĕсле тус" тенĕччĕ. — *А.Т.*) туянать те килне таврăннă май вăрман уçланкине кĕрсе канма ларать, пÿрнисене кĕсле хĕлĕхĕсем тăрăх "пăрчăкан чуппи пек çăмăл" çÿретме тытăнать, илемлĕ кĕвĕ илтĕнсен вырăна кĕтмен çĕртен упа сиксе тухать.

Çил вĕрмест, уяр çанталăк
Кайнă тутлă ыйăха.
*Шăтăрт-шăтăрт* сас сасартăк
Вăратать тавралăха. [4]

Хăраса кайса Микуçăн
Ал-урн *тăр-тăр* чĕтрет.

Мĕншĕн хытă янраттартăм
*Йăнтăр-йăнтăр* кĕслене?

Кукăрне чăнах та кукăр
Урисем, анчах кунта
*Йăкăш-йăкăш, тăпăр-тăпăр*
Ташлама упа ĕста.

Кĕвĕ-çемĕ юратакан "Михал Иванча" Микуç пичче кĕсле кала-кала яла ертсе кĕрет.

Икĕ аллине пĕр харăс
Савăнса çупса, упа
*Йăкăш-йăкăш, тăрăс-тăрăс*
Ташласа пырать çулпа.

Кÿршĕри çынсем *чăл-паррăн*
Тарчĕç пÿрт таврашĕнчен. [4]

Ытти çыравçăсен хайлавĕсенче сайра тĕл пулакан е хăй кăна усă курнă евĕрлев сăмахĕсем Ухсайăн ытти сăвви-юмахĕсенче те витĕмлĕ ÿкерчĕк хываççĕ. Акă "Пур этем те *лăхă л-лахăл*" // Ăш тытса кулаççĕ-çке", "Сиксе тăчĕç тарçисем, / / *Йăлт-ялт* турĕç хĕçĕсем", "Çичĕ пуçлă пĕр упа // Пурăнать тет *шăлт та палт*", "Вăрман кашлать *кĕр те кĕр*", "Тĕрлĕ сасă *чăй та чай*", "Пуян мурĕ, çи те кÿп, // Ал чăмăрĕ *кÿп те кÿп!*" тенисем поэт художнике кăна тивĕçлĕ ÿкерчĕк кăларса тăратаççĕ. Чăн та, юлашки тĕслĕхĕ чылай кайран В.Ухли романĕнче те ("Шуркелсем", 1965. 213 с.) тĕл пулать: "Ун сарлака купарчине лешсем (доминолла выляса çĕнтерни-сем. — *А.Т.*) кÿп те кÿп тапкалаççĕ те çăвар тулли каçса кайса кулаççĕ". Анчах кунта авторĕ "тапкалаççĕ" глаголна ăнăçсăр усă курни калас шухăна сунчăлатса янă.

Ухсайăн ача-пăча хайлавĕсенчи "вĕлтĕр-вĕлтĕр çил" те, «кĕмсĕрт-кĕмсĕрт, шăй та шай" тăвакан бомбăсем те, "лĕчĕр-лечĕр" пылчăк та, "йăри-яри" хуçăлакан çиçĕм те, тымарĕ-мĕнĕпех "вăтăр-ватăр, вĕл" вĕçекен вагă йывăççисем те, "йăл та ял" çавасем те халăх поэчĕн сисĕмлĕ чĕри çут çанталăкри пур сасса-кĕвве те, пур тĕсе те, пур хускапăва та хăйне евĕрлĕ ÿкерсе кăтартма пултарнине палăртаççĕ.

Ухсай Яккăвĕ ытти халăх çыравçисен хайлавĕсене чăвашла куçарас тĕлĕшпе те нумай тăрăшнă. Унăн малтанхи ĕçĕсенчен пĕри (К.Чуковскин "Муха-Цокотуха" юмахне чăваш сăвăçĕ 1938 çулта "Шăна туйĕ" ятпа уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларнă) тĕпчевçĕсемшĕн кăсăклăрах та пек туйăнать. Тăлмачă евĕрлев сăмахĕсемпе ăнăçлă усă курнăран сăввăн хăш-пĕр çаврисем авторĕ çырнинчен (Приходили к Мухе блошки, // Приносили ей сапожки) ÿкерчĕклĕрех те пулса тухнă:

*Йăкăлт-йăкăлт* пăрçасем —
Урай касси каччисем
Мăшăр атă парнепе
Килнĕ кунта сиккипе.[5]

Туя хутшăнакан нăрă та ухсайлатса куçарнăран чăвашла чĕрĕрех те курăнать:

Нăрă пичче, эс пуян,
Мăйракусем ылттăнтан,
Тирĕс чавма вăхăт мар,
Ай-ну, ай-ну, яра пар,
*Тăпăр-тăпăр-тăпăртăк,*
Тапăртат тата партак.

Ку çавра оригиналта çапларах вуланать:

А жуки рогатые,
Мужики богатые,
Шапочками машут,
С бабочками пляшут.[6]

Тăлмачă Г.Тукайăн "Шурале" юмах-

не те чăвашла куçарса пичетленĕ" (1938, 1954). Вырăслине (С.Липкин ĕçĕ) танлаштарсассăн, пирĕн шутпа, Я.Ухсай куçарăвĕ ўкерчĕклĕрех пулса тухнă. Тĕслĕхрен, вырăслинче пĕр сверлев сăмахĕ кăна упранса юлнă пулсан, чăвашлинче вăл тăхăр вырăнта тĕл пулать. Çак хисен тугарла çырнине питех те çывăх тăрать. Ку куçарура та сăвăç хăш-пĕр ўкерчĕксене ухсайлатса кăтартма тăрăшнă: "Пĕччен çынна курсан вара // *Лăх-лăх, их-их* кулатăп", "Санна *кати-кати* туса // Пĕрре выляр-и иккĕн?", "Автан сасси *шари-шари* // Йĕри-тавра пуçланĕ" т.ыт.тс.

Ухсайăн ача-пăча хайлавĕсенчи евĕрлев сăмахĕсем пур чухне те ăнăçлă ўкерчĕксем хывнă тесе татса калама çук: Пирĕн шутпа, "Пуртă сасси *тук та тук*!" "*Чик-чирик* чее çерçи" тенисем — вырăсла шухăшласа чăвашла çырнисем. Чăваш кăшт урăхларах калаш пулĕччĕ. Тăван халăхăмăрăн тăрни те *ки-как, ки-как* тесе вĕçмест (*кăрлинк-кăрлинк* тет), уйăпĕ те *кăвăвик!* темест. Чипер вĕçекен кăвакал çуначĕ те çакăнта кăтартнă пек сасă кăлармасть:

> Çунатне *çătти те çат*
> Çапакан кăвакалсем
> Вăрăммăн майне тăсса
> Явăнаççĕ пĕлĕтре. [7]

Тўпене хăпарнă кăвакал çуначĕ çат-çат-çат-çат! тăвакан пек. 

Пĕтĕмлетсе çакна калама пулать: Ухсайăн сăвви-юмахĕсенчи евĕрлев сăмахĕсен сисĕмлĕ тĕнчи сăвăçăн ача-пăча хайлавĕсене сĕткен парса тăрать.

## УСĂ КУРНĂ ЛИТЕРАТУРА


[1] Ухсай Я. Кĕслеçĕпе упа. Шупашкар, 1954. 5 с.

[2] Ухсай Я. Суйласа илнисем. I том. Шупашкар, 1971.

[3] Ухсай Я. Вут чĕлхе. Шупашкар, 1940.

[4] Ухсай Я. Кĕслеçĕпе упа. Шупашкар, 1954.

[5] Чуковский К. Шăна туйĕ. Шупашкар, 1938.

[6] Чуковский К. Муха-Цокотуха. Чебоксары, 1987.

[7] Ухсай Я. Вырăс ачи. Шупашкар, 1950.


**Анатолий ТИМОФЕЕВ-ЫХРА**